25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ДЕКАБРЬ 16 ЮНКУН 291(6226) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## Çамрăк выльăхсене кĕтсе илме хатĕр пулар

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата колхозсемпе совхозсенче выльăхсен хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленийĕ [illegible] çĕклерĕ. Партипе правительство кăтартса панă мерăсене тĕплĕн пурнăçласа, [illegible] Чăваш республикинчи колхозсем 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес [illegible] ÿсĕмсем турĕç. 1942 çулăн 11 уйăхĕ хушшинче [illegible] 44,6 процент, сыснасен хисепĕ 46,8 процент, качакасемпе сурăхсен хисепĕ 78,2 процент ÿсрĕ.

[illegible]

Уйрăм колхозсенче çамрăк выльăхсене сивĕ, тасамар витесенче усраççĕ, çакăн пирки вара вĕсем вилеççĕ. Вăл çитменлĕхсем кăçал пачах та пулмалла мар. [illegible]

[illegible] ĕçне тĕрĕслесе ертсе пымалла.

[illegible] уйрăм колхозсен, çĕрĕç пайĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем нумай-ха. Çамрăк выльăхсен пĕр пайĕ вилсе пĕтни 1942 çулта та пулчĕ. Çакă вăл уйрăм колхозсен, çĕрĕç пайĕсен тата партипе совет организацийĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Çамрăк выльăхсем уйрăмах Калинино, Елчĕк, Комсомольски районсенче чылай вилсе пĕтнĕ. Çакă ĕнтĕ ку районсенчи хăшпĕр колхозсен фермисенче ĕçлекенсем хăйсен ĕçне юлхавлăн туса пынинчен, колхоз председателĕсем çак пысăк ĕçшĕн тăрăшманнинчен килнĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă колхозсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлăн аталантарса пыма хушать. Çамрăк выльăхсене пĕтĕмĕшпех сыхласа хăварса, тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтерсе, ĕçе лайăх йĕркелесе пыни—фронт ыйтăвне пурнăçлани, тăшмана пĕтерсе тăкма пулăшни пулать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн кĕрешер, фермăсен ĕçне лайăхлатар, кашни çамрăк выльăха пăхса çитĕнтерер.

## Хĕрлĕ Çар валли аш-какай фончĕ тăвасси çинчен

### Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

Хĕрлĕ Çар аш-какай ытларах ыйтнине тивĕçтерес шутпа колхозниксем Хĕрлĕ Çар валли аш-какай фончĕ тума кăмăл тунине ырласа, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ **çапла йышăнаççĕ:**

1. 1943 çулта Хĕрлĕ Çар валли аш-какай фончĕ тăвас. Çавна май колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне аш-какай памалли виçене государствăна обязательнăй йĕркепе аш-какай паракан çĕр лаптăкĕн кашни гектарĕнчен шутласа памалла тăвас: Канаш, Советски, Красноармейски, Шупашкар тата Шăхасан районĕсем тăрăх гектартан 1,4 килограмм, ытти районсем тăрăх вара—1,3 килограмм памалла тăвас.

2. Государствăна обязательнăй йĕркепе аш-какай памалли хаксене, йĕркене, условисене тата ответлăха Хĕрлĕ Çар фондне аш-какай пана çĕрте те вăя кĕртмелле тăвас.

3. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш АССР-чи уполномоченнăйне тата райсовет исполкомĕсен председателĕсене Хĕрлĕ Çар фондне аш-какай памалли плана кашни колхоз патне çитерме тата ăна государствăна обязательнăй йĕркепе аш-какай парас ĕç валли тунă срокĕсенчех пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртме хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ **А. МАТВЕЕВ.**

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ **И. ЧАРЫКОВ.**

## МУСКАВ, КРЕМЛЬ, СТАЛИН ЮЛТАША

Государствăна тырпул памалли çулталăкри плана 109 процент, утă памалли плана 21 процент тата аш-какай памалли плана 133 процент тултарнă хыççăн, Сирĕн, Сталин юлташ, докладпа хавхаланса тата хăйсен тăван çĕршыв умĕнчи, ăна фронтра хÿтĕлекенсем умĕнчи — Хĕрлĕ Çар умĕнчи тивĕçне ăнланса, Орел облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен килĕнчи выльăхсенчен Хĕрлĕ Çар фондне 10.000 пăт аш-какай тата хăйсен запасĕсенчен 22.000 пăт çĕрулми парĕç. Аш-какайпа çĕрулмие Хĕрлĕ Çар фондне парас ĕç малалла пулса пырать.

ВКП(б) Орел Обкомĕн секретарĕ МАТВЕЕВ

## МУСКАВ, ЦК ВКП(б), СТАЛИН ЮЛТАША

Ярославль облаçĕнчи ялти çамрăксем, комсомолецсем тата союзра тăман çамрăксем, Сирĕн, Сталин юлташ, докладпа приказ çине ответлесе, самолетсен «Ярославский комсомолец» ятлă эскадрильйине тума укçа пухас ĕçе туса ирттерчĕç.

Виçĕ эрне хушшинче колхозлă ялăн çамрăк патриочĕсем çак ĕç валли 200,000 тенкĕ укçа хывреç. Эскадрилья тума укçа пухни колхозри çамрăксен советла патриотизмне уççăн кăтартса паракан демонстраци пулса тăчĕ. Пухнă укçа Госбанк отделенийĕсенчи текущи счет çинче сыхланса усранать.

ВЛКСМ Ярославль обкомĕн секретарĕ КОСТАКОВ.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### Декабрĕн 14-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

Декабрĕн 13-мĕшĕнче Сталинград районĕнче нимĕçсен 42 самолетне пĕтерсе тăкнă, вĕсенчен 33-шĕ транспортнăй самолетсем пулнă.

* * *

Декабрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 15 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 45 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чаçсем, штурмлакан пĕчĕк ушкăнсене уйăрăлса кĕрешсе, нимĕçсенчен темиçе дзота тата противникăн вăйлă тĕреклетнĕ опорнăй пунктне тасатнă. Нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Хулан çурçĕр хĕрринче пирĕн артиллеристсем тăшманăн 6 дзочĕпе 7 блиндажне пĕтерсе тăкнă, артиллери батарейине тата минометсен 3 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противник çине персе тăнă. Кун каçа тăшманăн 40 дзотне çитти ишĕлтернĕ, нимĕçсен пехотине пĕр батальон таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра пирĕн артиллеристсем противникăн танкĕсен атакине сирсе янă. Нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем çапăçса разведка тунă. Противникăн окопĕсене вăркăнса кĕрсе кайса, вĕсем гитлеровецсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă тата вĕсен хĕçпăшалĕсене тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре противникăн пехотипе танкĕсем пирĕн позицисене çĕнĕрен атакăлама тытăннă. Пысăк çухатусем тÿссе, вĕсем пирĕн подразделенисене пăртак каялла чакарнă. Çав çапăçура совет боецĕсем тăшманăн 1,000 салтакĕпе офицерне çитти вĕлернĕ, 11 танкне тата хăй тĕллĕн çÿрекен 7 орудине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă, уйрăм участоксенче противникăн контратакисене сирсе тăнă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра нимĕçсен пехоти танксем пулăшса пынипе Струголин юлташ командир пулса тăракан подразделенине атакăланă. Пирĕн танкистсем нимĕçсен çапăçу речĕсен хушшине вăркăнса кĕрсе кайнă та пехотăна танксенчен уйăрса илнĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех гитлеровецсен 200 çын, 11 танк, 3 оруди, 9 миномет тата 4 пулемет пĕтнĕ. Пăртак тăрсан противник çапăçăва 30 танк кĕртсе янă. Морозов юлташ ертсе пыракан артиллеристсем тăшманăн танкĕсене çывăха янă та вĕсене тĕллесе персе çĕмĕрсе пуçланă. Нимĕçсем орудисем персе тăракан çав вырăнтан пăрăнса кайма хăтланнă. Анчах артиллеристсем хăйсен позицийĕсене часах улăштарнă та тăшманăн машинисем çине каллех вут-çулăм çутарма пуçланă. Гитлеровецсен татах 15 танкĕ тата темиçе çĕр салтакĕпе офицерĕ пĕтсе, вĕсем каялла чакнă.

Великие Луки районĕнче пирĕн чаçсем çавăрса илнĕ нимĕç гарнизонĕсене пĕтерессшĕн çапăçнă.

* * *

Воронежран кăнтăралларахра пирĕн подразделенисем çапăçса пырса разведка тунă та тактика енчен паха пулса тăракан темиçе высотана тытса илнĕ. Противник хăйĕн позицийĕсене каялла туртса илес тесе темиçе хутчен те контратака тунă. Гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă, хăйсене пысăк çухатусем тÿстернĕ. Çав çапăçура совет боецĕсем тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне çитти пĕтерсе тăкнă тата 200 гитлеровеца çитти тыткăна илнĕ. 11 пулемет тата винтовкăсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем пĕр высота районĕнче, противник танкĕсен атакине сирсе ярса, малалла куçнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли таран выртса юлнă. Пирĕн артиллери противникăн артиллерийĕн 2 батарейине тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри партизансем нимĕçсен фашистла захватчикĕсен чугунçулĕсене пыра-пыра хытă сиенлеççĕ. Çак кунсенче партизансем активлăн кĕрешсе пĕр пысăк чугунçул узелĕн ĕçĕсене йăлтах чарса лартнă. Çав операци вăхăтĕнче 2 хурçă кĕпере сирпĕнтерсе янă, вĕсенчен пĕри 290 метр тăршшĕ, тепри 235 метр тăршшĕ пулнă. Темиçе чугунçул станцине аркатса тăкнă, чугунçулсене тата нумай вак кĕпере çĕмĕрнĕ. Кунсăр пуçне, партизансем 5 паровоза, темиçе вуншар вагона ÿпĕнтерсе янă, горючи складне тата ытти тĕрлĕ темиçе склада çунтарса янă. Совет патриочĕсем противникран трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Сталинград районĕнче нимĕçсен сывлăшран тапăнассинчен хÿтĕлекен 241-мĕш полкĕнчи 2-мĕш дивизионăн командирне Курт Кюллер майора тыткăна илнĕ. Майор çапла каласа панă: «Йышлă фактсем тăрăх эпĕ çакна ĕненсе çитрĕм: Германи министерстви вăрçă ĕçĕсем çинчен пĕлтернĕ чухне нихăçан та чăннине каламасть. Пирĕн пĕлтерÿсем кирек хăçанах та çынсене тĕлĕнтерсе яма, пысăк ĕçсем çинчен сасартăк пĕлтернинe ĕненекен çынсене ăнтан яма, вĕсене улталама тăрăшаççĕ. Çавăнпа эпĕ нимĕç командованийĕн официальнăй пĕлтерĕвĕсене ĕненместĕп. Эпĕ çакна пĕлетĕп: çав пĕлтерÿсене фронтра ĕçсем мĕнле пыни çинчен пĕлтерес тесе мар, чăннине пытарас тесе çыраççĕ. Анчах кирек мĕнле пытарсан та, Германи çарĕн çухатăвĕсем калама çук пысăккине пурте пĕлеççĕ. Ку вăл кашни хуларах, кашни пĕчĕк ялтах, кашни çемьерех те паллă».

* * *

Грецирен унта Итали гарнизонĕсене час-часах тапăнни çинчен пĕлтереççĕ. Декабрĕн пуçламĕш кунĕсенче Грецири партизансем Керкира портне тапăнса 47 итальянеца вĕлернĕ. Фивы хулин районĕнче патриотсем итальянецсен колонни çине пулеметсемпе пенĕ. 50 оккупанта ытла вĕлернĕ е амантнă.

### Декабрĕн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чаçсем çĕрле противника атакăласа темиçе çурта тытса илнĕ. 80 гитлеровеца вĕлернĕ, 2 станковăй тата 3 ручной пулемет, 18 автомат тата винтовкăсемпе боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн артиллеристĕсем сасартăк вăйлăн пеме тытăнса нимĕçсен пĕр батальон таран пехотине сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем нимĕçсен пехотин контратакине сирсе янă та, каялла чакакан гитлеровецсене хăваласа пырса, вĕсен окопĕсене вăркăнса кĕрсе кайнă. Çав çапăçура противникăн 200 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем противникăн умлăн-хыçлăн тунă тăватă контратакине сирсе янă. Вăйлă вут-çулăм айне пулса, нимĕçсем кашни хутĕнчех, совет чаçĕсен позицийĕсем патне çитеймесĕрех, каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 300 вилли таран выртса юлнă тата çунса кайнă 5 танкĕ ларса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем, наступленилле çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан çав пунктшăн пынă çапăçура нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне яхăн пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем 3 танк, 30 оруди, 40 пулемет, 200 винтовка, 50 автомашина, 10 тягач тата боеприпассем, продовольстви, тĕрлĕ япаласем хунă 8 склада тытса илнĕ. Противникăн 50 салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем, противникăн контратакисене сирсе, наступленилле çапăçусем туса пынă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра противник, пехотăпа танксен çĕнĕ вăйĕсене илсе пырса, пирĕн чаçсене малалла куçма чарма хăтланать. Кун каçа гитлеровецсен ултă контратакине сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен 3 йывăр танкне персе çĕмĕрнĕ тата 400 салтакĕпе офицерне çитти пĕтерсе тăкнă.

Великие Луки районĕнче противникăн çавăрса илнĕ гарнизонĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçаççĕ.

* * *

Новороссийск районĕнче Н-ски чаçăн артиллеристĕсемпе минометчикĕсем нимĕçсен 9 дзотне ишĕлтернĕ, 3 минометне тата 12 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Н-ски соединенин снайперĕсем 3 кун хушшинче 185 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Минск хулинче тухса тăракан фашистла пĕчĕк хаçат нумаях пулмасть нимĕç командованийĕн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерÿ Минск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрядне пĕтерсе тăкни çинчен каланă. Çав пĕлтерÿ вăл пĕтĕмпех суя пĕлтерÿ. Чăннипе пĕр уйăх каялла партизансем нимĕçсене самаях лÿчĕркенĕ. Гитлеровецсем партизансене хирĕç пысăк карательнăй отряд янă, çав отрядăн танксемпе бронемашинăсем те пулнă. Гитлеровецсем темиçе кун вăрмансенче аташса çÿренĕ, вĕсене партизансем тĕтăшах пыра-пыра çапнă. Совет патриочĕсем сасартăк çапăçма тытăнса нимĕçсене пайăн-пайăн çĕмĕрнĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен 400 çитти салтакĕпе офицерĕ, 3 танкĕ, 2 бронемашини пĕтнĕ. Партизансем лайăххах çапса аркатнă хыççăн нимĕçсем вара нимĕнсĕрех Минска таврăннă.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче пирĕн боецсем нимĕçсен 8-мĕш дивизийĕнчи 38-мĕш полкăн 3-мĕш ротине çапса аркатнă. Çав ротăн юлашкийĕсене — 29 салтака — тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнĕ салтаксем Харих, Зуха, Горцольниг тата Кизлих çапла каласа панă: «Пирĕн рота Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче вăрçă пуçланнăранпах çапăçать. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче ротăра 170 çын пулнă. Тăватă уйăх хушшинче ăна виçĕ хутчен çĕнĕ вăйсем хушса панă. Анчах та октябрьте, лÿчĕркеннĕ дивизие çĕнĕрен йĕркелесе яма Франципе илсе кайнă чухне, вăл ротăра мĕнпурĕ те 11 çын çеç пулнă. Кăçалхи çулла пирĕн дивизие тепĕр хут Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта ячĕç. Çав вăхăт тĕлне пирĕн ротăра 210 çын пулнă. Юлашки çапăçу пире йăлтах хуçса пăрахрĕ. Вырăссем пире кăтмен çĕртен тата малтан артиллерирен персе тăмасăрах атакăларĕç, малтанхи минутăсенчех ротăн командирне Фаупелт обер-лейтенанта вĕлерчĕç. Ротăн юлашкийĕсем, юханшыв патне пырса хĕсĕннĕскерсем, вара тыткăна парăнчĕç».

* * *

Италирен унта итальянецсемпе нимĕç салтакĕсем хушшинче тытăçусем пулни çинчен пĕлтереççĕ. Миланра пĕр ушкăн хĕрарăм нимĕç офицерĕсен групшине чулсемпе пенĕ. Гитлеровецсем пăшалпа пеме тытăннă. Пырса çитнĕ итальянец салтакĕсем вара нимĕçсене хĕçпăшалсăрлатнă та хĕнесе тăкнă.

## Ытлашши тырра—Хĕрлĕ Çар фондне

ЕЛЧЕК, декабрĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Ишмурзино-Сура ялсоветĕнчи «Марс» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çара мĕнпур майсемпе пулăшса тăраççĕ.

Çак кунсенче унта колхозниксен аслă пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ Абдул Гаязов колхозниксене Хĕрлĕ Çарăн Сталинград районĕнчи тата Центральнăй фронтри çĕнтерĕвĕсем çинчен, Хĕрлĕ Çар тавне тивĕç пулнă Тамбов тата Саратов облаçĕсенчи колхозниксен лайăх пуçарăвĕ çинчен пĕлтерчĕ. Вăл колхозниксенчен: «фронта пулăшас тĕлĕшпе эпир татах мĕн тума пултаратпăр?»—тесе ыйтрĕ. Колхозниксем пĕр-пĕринпе канашласа илчĕç. Вĕсем хăйсен ытлашши тыррине Хĕрлĕ Çар фондне пама кăмăл туни çинчен пĕлтерчĕç. Çав кун колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне хывма пурĕ 360 пăт тырă пухрĕç. Ку ĕçре коммунистсемпе комсомолецсем лайăх пример кăтартрĕç. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ, вăлах колхоз председателĕ А. Гаязов—36 пăт, колхоз письмоносецĕ Галищев—24 пăт, Т. Галиев—21 пăт, ялсовет председателĕ Гарифуллин—21 пăт пачĕç.

«Марс» колхоз членĕсем хăйсен примерне йышăнса илме республикăри мĕнпур колхозниксене чĕнчĕç. Кун хыççăн пирĕн районри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем темиçе сехет хушшинче 141 пăт, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 90 пăт тырă пухрĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Мартынов юлташ хăй 24 пăт, фронтран аманса таврăннă красноармеец Виссарионов 6 пăт пачĕç.

Колхозниксен патриотизмне кăтартакан çак ĕç районра пысăк çĕкленÿпе пулса пырать. Çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне туйса, колхозниксем фронта пулăшассишĕн нимĕн те шеллемеççĕ.

Н. ВОЛКОВ.

## Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене

### Елчĕк районĕнчи „Марс“ колхоз членĕсем чĕнсе калани

Юлташсем, колхозниксемпе колхозницăсем! Вунçичĕ уйăх ытла ĕнтĕ этемлĕх историйĕ курман хаяр çапăçусем пыраççĕ. Отечественнăй вăрçă хирĕсенче Совет Союзĕнчи халăхсен пурнăç ыйтăвне, Аслă Октябрь çĕнтерĕвĕсен кунçулне татса параççĕ. Фашистла ирсĕрсем пирĕн таса çĕре таптаççĕ, пирĕн чаплă хуласене, колхозлă ялсене пĕтерсе тăкма хапсăнаççĕ. Нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем пирĕн валли чуралăх, чухăнлăх тата вилĕм илсе килеççĕ. Вĕсем эпир нумай çулсем хушши тунă ĕçсен тивлетне пĕтерсе тăкасшăн, пире çаратса пĕтересшĕн. Анчах çун пек нихăçан та пулмĕ! Совет халăхĕ хăй çĕнтересси çирĕппĕн шанса тăрать.

Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем, пĕр çын пек пулса, ирсĕр тăшмана хирĕç тăван çĕршыв чыслăхĕшĕн, унăн никама пăхăнманлăхĕшĕн, совет çынни ирĕклĕхĕпе пурнăçĕшĕн кĕрешме çĕкленчĕç. Совет халăхĕсен çемьи халĕ нихăçанхинчен те çирĕпрех пĕрлешрĕ.

Пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар Сталинград районĕнче тата Центральнăй фронтра тăшмана хирĕç наступленилле çапăçусем туса, тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапать, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пырать.

Тăшмана çĕнтересси фронтра çеç мар, тылра вăйлăн ĕçленинчен те килет.

Пирĕн задача тата тивĕçлĕх—колхозлă хирсенче мĕнпур вăя хурса ĕçлесе фронтпа тăван çĕршыв валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай, социализмлă промышленность валли чĕртавар парса тăрасси. Çакна тума колхозниксемпе колхозницăсене пирĕн çулпуçăмăр, аслă полководец Сталин юлташ чĕнет.

Тăван çĕршыв умĕнчи хамăр тивĕçе туйса, хаяр тăшмана хăвăртрах аркатса тăкас тесе, эпир, Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсем, хамăрăн хуçалăхра перекетленĕ, ĕçкунĕсем тăрăх илнĕ тыррăн пĕр пайне Хĕрлĕ Çарăн фондне хывма обязательство илтĕмĕр.

Çак ĕç валли эпир 360 пăт тырă пухрăмăр та ĕнтĕ. «Марс» колхоз председателĕ Абдул Гаязович Гаязов юлташ 36 пăт, ялсовет председателĕ Гарифуллин юлташ—21 пăт, письмоносец Галищев—24 пăт, колхозниксем Тибай Галиев—21 пăт, Сунгатуллин—9 пăт, З. Валеев—9 пăт пама уйăрса хучĕç.

Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем! Эпир сире пирĕн примера йышăнса илме чĕнетпĕр. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене татах та вăйлăнрах çапса аркатса пытăр.

Сывă пултăр пирĕн Рабочисемпе Хресченсен геройла Хĕрлĕ Çарĕ!

Сывă пултăр Тăван Совет çĕрĕ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуçăмăр, аслă полководец Сталин юлташ!

Колхозниксемпе колхозницăсен пĕрлешÿллĕ пухăвĕ хушнипе алă пуснă:

«Марс» колхоз председателĕ **АБДУЛ ГАЯЗОВ.**

Ялсовет исполкомĕн председателĕ **ГАРИФУЛЛИН.**

Колхозниксем: **З. ВАЛЕЕВ, Ш. СУНГАТУЛЛИН.**

## 1943 çулшăн аш-какай параççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрĕн 15-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Хĕрлĕ Çар фронтра çĕнтерÿллĕн çапăçни колхозниксене татах та вăйлăнрах ĕçлеме хавхалантарать. Районри колхозниксемпе колхозницăсем 1942 çулхи парăмсене вăхăтчен парса татса, çитес çулхи обязательствăсене пурнăçлама тытăнчĕç.

Именкассинчи «Малалла» колхоз членĕсем 1942 çулшăн аш-какай парса татнă. Вĕсем халĕ 1943 çулшăн пама тытăнчĕç. Ку ĕçе ялсовет исполкомĕн депутачĕсем пуçарса ячĕç. Депутатка Е. Степанова юлташ çитес çулшăн 46 килограмм, Г. Мефодьев—20 килограмм, 50 çулхи колхозник В. Сергеев—26 килограмм, М. Терентьев—40 килограмм аш-какай пачĕç. Колхозĕпе пурĕ 24 колхозник 1943 çулхи обязательствăсен шучĕпе аш-какай парас ĕçе хутшăнчĕç.

**Р. ВАСИЛЬЕВА.**

## Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли

ЭЛĔК, декабрĕн 15-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен районри комиссин складне колхозниксенчен кулленех тирсем, çăм тата ытти япаласем пырса тăраççĕ. Декабрĕн 12-мĕшĕ тĕлне хамăрăн мухтавлă воинсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлеме районĕпе 1.050 тир, 784 килограмм çăм, 113 çăм алшиш, 76 мулаххай, 79 çăм носки, ватта хурса çĕлетнĕ 53 брюки, 24 фуфайка, аялтан тăхăнмалли кĕпесем 68, кальсонсем 53 тата ытти те пухнă.

Пухнă çăмран 144 мĕшĕр çăмата йăваланă. Ăшă тумтирсем пухас ĕç вăйланса пырать.

**М. КРАСИЛЬНИКОВ.**

# ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

## Канашри тата Улатӑрти чугунҫул училищисен ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ мастерӗсемпе вӗренекенӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑласси ҫинчен

Чугунҫул транспорчӗ валли кадрсем хатӗрлес тӗлӗшпе ӑнӑҫлӑн ӗҫленӗшӗн тата вӗренӳпе ӗҫре тунӑ ҫитӗнӳсемшӗн чугунҫул училищисен ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ ҫак мастерӗсемпе вӗренекенӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑлас:

**Канашри училище тӑрӑх**

1. Степан Осипович **Абрамова**—старши мастера
2. Бернард Павлович **Дубровские**—вӗренекене
3. Анна Егоровна **Егоровӑна**—вӗренекене
4. Ромуальд Константинович **Жолтока**—вӗренекене
5. Алексей Павлович **Иванова**—вӗренекене
6. Николай Иванович **Kицеле**—вӗренекене
7. Руф Иосифович **Морозова**—вӗренекене
8. Екатерина Алексеевна **Ожогинӑна**—вӗренекене
9. Николай Григорьевич **Наливайкӑна**—мастера
10. Зинаида Семеновна **Родионовӑна**—вӗренекене
11. Дмитрий Тимофеевич **Чуранова**—вӗренекене

**Улатӑрти училище тӑрӑх**

12. Григорий Акимович **Дохленкӑна**—мастера
13. Николай Прокопьевич **Кузнецова**—вӗренекене
14. Аркадий Николаевич **Матвеева**—вӗренекене
15. Тамара Петровна **Метельниковӑна**—вӗренекене
16. Яков Григорьевич **Макарова**—мастера
17. Дмитрий Михайлович **Сапунова**—мастера
18. Петр Георгиевич **Сударчикова**—старши мастера
19. Екатерина Трофимовна **Трофимовӑна**—вӗренекене
20. Евгений Евгеньевич **Шигаева**—вӗренекене
21. Александр Степанович **Шангина**—мастера.

**Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.**

**Чӑваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарӗн ӗҫӗсене тӑваканӗ А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1942 ҫулхи декабрӗн 11-мӗшӗ.

# Хӗрлӗ Ҫар тавне тивӗҫлӗ пулар!

## Танксен колоннисене тума укҫа пухас ӗҫ республикӑра мӗнле пырать

Танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума республикӑри ӗҫҫыннисем декабрӗн 14-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпе 10.320.000 тенкӗ укҫа пухнӑ. Вӑл шутран танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума—9.073.000 тенкӗ.

Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укҫа пухас тӗлӗшпе пӗрремӗш вырӑн **Вӑрнар** районӗ йышӑнать. Вӑл декабрӗн 14-мӗшӗ тӗлне 1.200.000 тенкӗ пухнӑ. Иккӗмӗш вырӑнта **Улатӑр** районӗ—1.100.000 тенкӗ пухнӑ, виҫҫӗмӗш вырӑнта **Чкаловски** район—750.000 тенкӗ пухнӑ. Юлашки кунсенче ҫак ӗҫ **Кувакино, Сӗнтӗрвӑрри** тата **Шупашкар** районӗсенче вӑйланни сисӗнет.

Анчах Первомайски, Шӑмӑршӑ, Етӗрне, Йӗпреҫ, Хӗрлӗ Чутай тата Октябрьски районсем ку тӗлӗшпе халӗ те сӳрӗк ӗҫлеҫҫӗ-ха. Первомайски районра пурӗ те 95.000 тенкӗ ҫеҫ пухнӑ. Ҫавӑн пекех Шӑмӑршӑ районӗнче—111.000 тенкӗ, Етӗрне районӗнче — 114.000 тенкӗ ҫеҫ пухнӑ. Юлса пыракан районсен руководителӗсем—ВКП(б) райкомӗсен секретарӗсемпе райсовет исполкомӗсен председателӗсем ку ӗҫ хӑй тӗллӗн пулассине шанса пурӑнаҫҫӗ пулас.

Танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума декабрӗн 14-мӗш тӗлне республикӑра пурӗ 1.250.000 тенкӗ пухнӑ. Ку ӗҫре **Ишлей, Елчӗк, Чкаловски** машинно-тракторнӑй станцисем малта пыраҫҫӗ. Ишлей машинно-тракторнӑй станцийӗн коллективӗ ҫак ӗҫ валли пурӗ 105.000 тенкӗ, Елчӗк МТС-ӗн коллективӗ—87.000 тенкӗ, Чкаловски МТС-ӗн коллективӗ—73.000 тенкӗ пухнӑ. Юлашки кунсенче ку ӗҫ Комсомольскипе Куславкка МТС-сенче вӑйланни палӑрать. Анчах Сӗнтӗрвӑрри, Пӑрачкав, Хӗрлӗ Чутай, Етӗрне, Шӑмӑршӑ машинно-тракторнӑй станцийӗсен коллективӗсем ку ӗҫе малтанхи пекех начар туса пыраҫҫӗ.

Танксен колоннисене тума укҫа пухас ӗҫе куллен большевикла ертсе пымалла. Ӗҫҫыннисем хушшинче массӑллӑ ӑнлантару ӗҫне анлӑн сарса, халӑхӑн вӑйӗпе танксен колоннине тума укҫа пухнӑ ӗҫре кашни колхозникпа колхозницӑна, трактористпа комбайнера явӑҫтармалла.

Республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсем, трактористсемпе комбайнерсем! Пурте, пӗр ҫын пек пулса, танксен колоннисене тума хамӑрӑн пэрекетлесе хӑварнӑ укҫа-тенкӗне парар!

## Хӗрлӗ Ҫара танксем, самолетсем туса парар

КОЛЬЦОВКА, (Вӑрнар районӗ), декабрӗн 15-мӗшӗ. **(Телеграфпа).** Кольцовкӑри Ленин орденлӗ, Сталин ячӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсем, Сталин юлташ Тамбов облаҫӗнчи колхозниксене саламлани ҫине ответлесе, танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума икӗ кун хушшинче 200.000 тенкӗ тата самолетсем тума 50.000 тенкӗ пухса укҫине банка хывреҫ. 500 тенкӗрен кая укҫа паракан колхозник пӗрэ те пулмарӗ.

Ҫакӑнпа пӗрлех колхозниксем ытти ӗҫсене те пысӑк ҫӗкленӳпе туса пыраҫҫӗ. Ҫураки валли вӑрлӑхсене хатӗрлесе ҫитертӗмӗр, ялхуҫалӑх машинисене пурне те юсаса хутӑмӑр. 1943 ҫулта акмалли ҫӗр ҫине тислӗк кӑларас ӗҫе пур майпа та васкататпӑр.

**Колхоз председателӗ А. ВАСЯНИН.**

*Пирӗн землякcем*

## Красноармеец Ефремов

Николай Алексеевич Ефремов действительнӑй службӑра Туркестанра кавалери полкӗнче пулнӑ. Отечественнӑй вӑрҫӑра та ӑна лашапа ӗҫлемелли чаҫре пулма тивнӗ.

— Лаша—манӑн кӗрешӳри тус. Винтовка тӑшмана вӗлерме, хама сыхлама кирлӗ, лашапа тиесе пынӑ «кучченеҫ» те тӑшмана пӗтерсе тӑкма кирлӗ,—тет Ефремов юлташ.

Ефремов Чкаловски районри Алманчӑ ялӗнчи колхозран икӗ лаша илсе ҫӗнӗрен йӗркеленӗ ҫар чаҫне пынӑ. Уйӑх та ҫурӑ ҫар ӗҫне вӗреннӗ хыҫҫӑн, Ефремов тӑракан часть Действующи арми йышне кӗчӗ, фронта кайрӗ, нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ ҫапӑҫма тытӑнчӗ.

Часть фронта ҫитсен 3—4 кунтанах Н-ски фронтри войскӑсем нимӗҫ оккупанчӗсене тӑван ҫӗршывран хӑвалама тытӑнчӗҫ. Ефремов ҫак операцине активлӑн хутшӑнчӗ, тӑшмана пӗтерессишӗн пыракан кӗрешӗве халӗ те активлӑн хутшӑнать.

Н-ски участокри малти подразделенисенчен пӗриншӗн хӑрушлӑх тухса тӑнӑ. Ҫак участока машинӑпа боеприпассем илсе пыма май килмен. Анчах та боеприпассем темӗн пекех кирлӗ, вӗсене илсе пырса памалла. Подразделени командирӗ боецсен пӗр ушкӑнне фронтӑн ҫак участокнэ, нимӗнле йывӑрлӑха пӑхмасӑр, боеприпассем илсе пыма хушрӗ. Отделени командирӗ урӑх ӗҫре пулнӑ пирки, ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртме Ефремов юлташа хушрӗ. Ефремов юлташ 10 боецпа ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртме тытӑнчӗ. Тӑшман артиллерийӗ перет. Авиацийӗ те пирӗн оборонӑн малти линийӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахать. Ефремов хӑйӗн колоннине пӗр пӗчӗк сукмак тӑрӑх илсе пырать. Тӑшман авиацийӗ ҫакна курать, анчах Ефремов хӑйӗн колоннине хӑвӑрт пӗр шурлӑхлӑ вырӑна илсе пырать. Тӑшман авиацийӗ нимӗнле сиен те тӑваймасть, боеприпассем артиллери батарейи патне ҫитеҫҫӗ, вӗсем нимӗҫсен пуҫӗсем ҫине ӳкеҫҫӗ, подразделенишӗн пулнӑ хӑрушлӑх сирӗлет.

Ефремов юлташ боевой задачӑна ялан отлично пурнӑҫлать. Ҫакӑншӑн вӑл сахал мар благодарность илнӗ. Октябрь революци 25 ҫул тултарнӑ уяв ячӗпе Ефремов юлташа ҫар командованийӗ тав турӗ, нумай'пулмасть ӑна сержант званине пачӗҫ.

**Капитан Р. ШАШКОВ.**

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

# Декабрьти плана срокчен тултарма пулчӗҫ

Декабрӗн 15-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Володин юлташ главнӑй инженер пулса тӑракан завод ноябрь уйӑхӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсем тӑрӑх Профсоюзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Совечӗпе пӗр Халӑх Комиссариачӗн виҫҫӗмӗш премине илме тивӗҫлӗ пулнӑ. Ҫак ятпа нумай пулмасть заводри работниксен, инженерла-техникла работниксен тата служащисен митингӗ пулса иртрӗ. Митинга завод директорӗ уҫрӗ.

— Ноябрьти ӗҫсене кура,—терӗ директор,—ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариачӗ пирӗн завода хӑйсен виҫҫӗмӗш премине пачӗҫ. Ҫакӑ вӑл пире декабрьте татах та лайӑхрах, татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме хушать.

Директор завод коллективне декабрьти плана срокчен тултарассишӗн тӑрӑшса ӗҫлеме чӗнчӗ.

Заводри рабочисемпе работницӑсен ячӗпе Пушкин юлташ ертсе пыракан цехри стахановец Береговой юлташ сӑмах каларӗ.

— Пирӗн цех, — терӗ вӑл, — заводри малта пыракан цех шутланать. Октябрьти плана вӑл 163 процент, ноябрьтине — 164 процент тултарнӑ. Цех коллективӗн ячӗпе эпӗ декабрьте ноябрьтинчен те тухӑҫлӑрах ӗҫлеме сӑмах паратӑп.

Ҫавӑн пекех Герасимовпа Пятахов стахановецсем те хӑйсен цехӗнчи работниксен ячӗпе сӑмах каларӗҫ.

ВКП(б) Центральный Комитечӗн заводри парторгӗ ноябрь уйӑхӗнчи ӗҫсен лайӑх енӗсене палӑртса, декабрьти плана тултарас тӗлӗшпе тумалли ӗҫсем ҫинче чарӑнса тӑчӗ.

— Плана тултарассин ӑнӑҫлӑхнэ, — тет вӑл, — производствӑра кирлӗ чӗр-тавара, материалсене тата ытти япаласене малтанах ҫителӗклӗ хатӗрлесе хуни татса парать. Пирӗн производство командирӗсен малашне хӑйсен ӗҫ участокӗсене лайӑх хатӗрлесе хурассишӗн ытларах тӑрӑшас пулать.

Юлашкинчен вӑл заводри инженерсемпе техниксене вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек тимлӗхпе ӗҫлеме, производство ыйтӑвӗсене татса панӑ ҫӗрте тавҫӑруллӑ та пуҫарулла пулма чӗнет.

ВЦСПС-па Халӑх Комиссариачӗн премине илнӗ ятпа митингра пулнисене ВКП(б) райком секретарӗ, ВКП(б) Обком секретарӗ Крылов юлташ саламларӗҫ.

— Премие илме тивӗҫлӗ пулни, — тет Крылов юлташ, — сире, заводри работниксене, малашне халичченхинчен лайӑхрах ӗҫлеме хушать. Ӑмӑртура малти ретрех пулас тесен, сирӗн ку таранччен тунӑ ӗҫсемпе лӑплана ларма юрамасть, малашне ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн кӗрешес пулать.

Крылов юлташ завод коллективне ӗҫре йӗркеллӗ, ҫирӗп дисциплинӑллӑ пулас тӗлӗшпе Хӗрлӗ Ҫар воинӗсенчен пример илме чӗнет.

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариачӗн премийӗ ҫине ответлесе, митингра пулнисем декабрь уйӑхӗнчи производство программине срокчен тултарма, ҫӗршывпа фронта планран ирттерсе продукци пама обязательство илчӗҫ.

**А. ЛУПОВ.**

## Хӗрлӗ ялавлӑ цехсем

Н-ски завод Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑрантпах ӑнӑҫлӑн ӗҫлет. Ҫӗршывпа фронта продукци ытларах парассишӗн кӗрешсе, производство планне уйӑхран уйӑха ирттерсе тултарать. Ноябрь уйӑхӗнчи плана срокчен тата лайӑх пахалӑхпа тултарнӑшӑн завод ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариачӗн виҫҫӗмӗш премине илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Ҫак кунсенче заводри жюри цехсемпе отделсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн ноябрьти итогӗсене пӑхса тухнӑ. Тӗп цехсен куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне жюри Кинзбургский юлташӑн цехӗ аллинчех хӑварма йышӑннӑ. Вӑл цех Хӗрлӗ ялава пиллӗкмӗш уйӑх ӗнтӗ алӑран вӗҫертмест.

Кинзбургский юлташӑн цехӗ — заводри малта пыракан цех. Цех ҫапла малта пыни унти инженерсемпе техниксем производствӑна пултаруллӑн ертсе пынинчен, рабочисемпе работницӑсем пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫленинчен килет. Ноябрь уйӑхӗнче цехри рабочисем пурте пекех нормӑна ирттерсе тултарнӑ. Нумайӑшсем вара нормӑран 1,5—2 хут тухӑҫлӑрах ӗҫлеҫҫӗ. Стахановецсем Люминарская, Данилова, Григорьева, Хренова юлташсем—цехри двухсотницӑсем. Детальсене хатӗрлекен Чиркова, пӗтӗҫтерекен Саначкина работницӑсен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ те вӗсенчен кая мар.

Кинзбургский юлташӑн цехӗ ку уйӑхра та хӑвӑртлӑхсене чакармасӑр ӗҫлет, султалӑкри ӗҫсен кӑтартӑвӗсемпе пуринчен мала тухассишӗн кӗрешет.

Подсобнӑй цехсен куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Златопольский юлташ ертсе пыракан цех илнӗ. Унӑн цехӗ тӗп цехсене детальсем, материалсем хатӗрлесе парса пулӑшас тӗлӗшпе ноябрьте чи лайӑх тӗслӗхсем кӑтартнӑ.

Заводра отделсен куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне те тунӑ. Иртнӗ уйӑхри ӗҫсен кӑтартӑвӗсем тӑрӑх ҫав ялава производство начальникӗн отделне пама йышӑннӑ. Унӑн отделӗ учетпа отчет ӗҫне лайӑх туса пырать, отделри работниксемпе работницӑсем ӗҫре йӗркеллӗ тата ҫирӗп дисциплинӑллӑ пулнипе палӑрса тӑраҫҫӗ.

## Тӑван ҫӗршыва—вутӑ

ВӐРНАР. **(Телефонпа).** Леспромхозра ӗҫлекенсем — йывӑҫ касакансемпе вутӑ турттаракансем — пысӑк ҫӗкленӳпе ӗҫлеҫҫӗ, ҫӗнӗ ҫула ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Вутӑ турттаракансем пурте пекех хӑйсен кулленхи нормисене ирттерсе тултараҫҫӗ. Йывӑҫ касакансем те хӑйсен ӗҫне хӑвӑрт хӑнӑхса пыраҫҫӗ. Вӗсенчен чылайӑшӗсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек хӑвӑртлӑхпа ӗҫленине пула, Вӑрмар леспромхозӗ чугунҫул транспортне ҫак ҫулӑн иккӗмӗш ҫурринче вутӑ тӑратмалли плана декабрӗн 8-мӗшӗ тӗлне хатӗрлес енӗпе 118 процент, турттарас енӗпе 111 процент тултарчӗ.

Пирӗн леспромхозра вутӑ хатӗрлекен районсенчен хальхи вӑхӑтра Калинински район аван ӗҫлет. Ку район кӑҫалхи задание срокчен вӗҫлесе, 1943 ҫулхи задание 20 процент тултарчӗ. Шӑхасан районӗ вара палӑрмаллах юлса пырать. Вӑл вӑрманта ӗҫлеме кирлӗ ӗҫ вӑйне сахал уйӑрса панине пула турттарас ӗҫсен планне 20 процент тултарайман-ха. Шӑхасан районӗнчи партипе совет органӗсен ҫак ҫитменлӗхе пӗтерме тӑрӑшмалла.

**Г. САЗОНОВ,**
**Леспромхоз директорӗ.**

## Ҫитменлӗхсене пӗтермелле

ИШЛЕЙ. Комсомолӑн чылай пуҫламӗш организацийӗсем вӑрҫӑ кунӗсенче хӑйсен ӗҫне ҫӗнетсе урӑхлатрӗҫ. Сыбайкасси ялсоветӗнчи «Ыраш» колхозри пуҫламӗш организаци (секретарӗ Р. Вершинина юлташ) колхоз производствишӗн тӑрӑшать. Комсомолец-бригадир Иван Бычков ӗҫе тӗрӗс йӗркелерӗ, ҫавна май унӑн бригади аван ҫапас, государствӑна тырӑ парас ӗҫсене Октябрь уявӗччен вӗҫлерӗ. Ку колхозра ҫамрӑксем ӑнлантару ӗҫне аван туса пыраҫҫӗ. Вӗсем союзра тӑман ҫамрӑксем хушшинче калаҫусем ирттереҫҫӗ. Ҫак кунсенче колхозри икӗ стахановкӑна комсомол ретне илчӗҫ. Ҫавӑн пекех Салабайкассинчи Крупская тата Хӑймалакассинчи Жданов ячӗпе тӑракан колхозсенчи пуҫламӗш организацисем те 4 ҫамрӑка ВЛКСМ ретне илнӗ.

Анчах «Клевер» колхозри комсомол организацийӗ япӑх ӗҫлет. Комсомолӑн пуҫламӗш организацийӗн секретарӗ К. Григорьева юлташ хӑйӗн ӗҫне япӑх туса пырать. Ку пуҫламӗш организацире отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа пӗтӗмпе те икӗ пуху ҫеҫ туса ирттернӗ. Пухусенче комсомолецсем обязательствӑсем нумай илнӗ пулсан та, пуху конкретлӑ решенисем йышӑннӑ пулсан та, вӗсене пачах та пурнӑҫламан. Комсомол организацинче пӗтӗмпе те 3 комсомолец ҫеҫ юлнӑ. Вӗсем те колхоз производствинче сахал ӗҫлеҫҫӗ. Вӑрҫӑ пуҫланнӑ кунран вара пӗр ҫамрӑка та комсомол ретне илмен. Кӑҫалхи февраль уйӑхӗнче А. Олепов ҫамрӑк комсомола илме ыйтса заявлени панӑ, анчах та унӑн ыйтуне паянхи кунччен пӑхса тухман. Ку колхозра комсомола илмелли ҫамрӑксем нумай, анчах та вӗсене члена илес тӗлӗшпе Григорьева юлташ тӑрӑшмасть.

Комсомол организацийӗ хӑйӗн ӗҫне япӑхлатнине пула, колхоз паянхи куна ҫитсе те авӑн ҫапса пӗтермен. Ҫавӑн пекех вӑрлӑхлӑх клевер та юр айӗнчех. Авӑн ҫапма ирхине 8 сехетре тухаҫҫӗ те каҫхине 4—5 сехетрех пӑрахса кӗреҫҫӗ. Ӗҫе кирлӗ пек йӗркелес пирки комсомол организацийӗ нимӗнле мерӑсем те йышӑнмасть.

Ку колхозра парторганизаци комсомол организацине тивӗҫлӗ пулӑшу памасть.

Григорьева юлташ член укҫине те вӑхӑтра пуҫтармасть. Вӑл 4 уйӑх хушши член укҫине пухман ӗнтӗ. Шурча ялсоветӗнчи «Самолет» колхозри комсомол организацийӗн секретарӗ Н. Суворов хӑй те июль уйӑхӗнчен вара член укҫи тӳлемен.

Ҫак ҫитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтермелле.

**К. СЕРЕБРЯКОВА.**
**И. ГРИГОРЬЕВ.**

# Ют ҫӗршывсенче

## Гитлерла ирсӗрсем Украинӑра вара-хурахла ӗҫсем тӑваҫҫӗ

СТОКГОЛЬМ, декабрӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). «Гамбургер фрейденблат» ятлӑ гитлерла хаҫат нимӗҫсен фашистла саратуҫисем Украина ялӗсенче вӑрӑ-хурахла хӑтланни ҫинчен намӑса пӗлмесӗр ҫырать. Хаҫат ҫапла ҫырать: нимӗҫсен «ялхуҫалӑх руководителӗсем» Германие ӑсатмашкӑн ҫавтери нумай продукт пама хушнӑ, «ҫав требование пурнӑҫа кӗртес тесен, украинецсен виличченех ӗҫлеме тивет пулмалла». Гитлеровецсен банди, саранчасем пек, Украинӑри ялсене саратать, выльӑх-чӗрлӗхе пусса пӗтерет, хресченсенчен юлашки ҫӑкӑр чӗллине туртса илет. «Нимӗҫ войскисем,—тесе ҫырать хаҫат,—продовольстви запасӗсене хӑйсем валли ҫӑткӑнла расходланипе ҫамрӑк выльӑхсен хисепӗ, уйрӑмах сысна ҫурисен хисепӗ, питӗ нумай чакнӑ». Хаҫат ҫакна йышӑнать: выльӑх апатне туртса илнӗ пирки халлӗхе хресченсен аллинче юлнӑ выльӑхӑн выҫӑ вилмелле пулать. «Хресчен лаши,—тесе ҫырать хаҫат,—хӑй валли апат юр айӗнчен чавалаcа пухать, ӗнесем выҫӑ пирки аран-аран утикалаҫҫӗ».

«Дейче Украинэ цейтунг» ятлӑ тепӗр хаҫат ҫапла ҫырать: «Нимӗҫ Украинин задачи—ҫав края тата унӑн халӑхне мӗн май килнӗ таран часрах нимӗҫсем валли ӗҫлеттерме тытӑнасси пулать», тет; урӑхла каласан, ҫав задача—Украинӑран мӗн илсе тухма пултарнине пурне те илсе тухасси, ӑна пӗр сӗвем ҫип юлмиччен саратасси пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та, ҫав хаҫат каланӑ тӑрӑхах, «Украинӑн ялхуҫалӑхӗ умне питех те пысӑк требованисем лартнӑ». Украина халӑхӗ нимӗҫсем хушнине туман пирки ӳпкелешсе, хаҫат вӗсене ҫапла хӑратса ҫырать: нимӗҫ влаҫӗсем «халӑха нимӗҫсене кирлӗ пек хӑвӑртлӑхпа ӗҫлеме хӑнӑхтарӗҫ», тет. Ялсенче горючипе лаша таврашӗ ҫуккине пула, «хресченсен уйхире кӗреҫепе чавса сухаламалла пулать». Нимӗҫ захватчикӗсем Украина халӑхне хӑйсен крепостнойӗсем туса хурса, ӑна выҫӑ пурнӑҫпа асаплансa пурӑнмалла тунӑ. «Халӑха тӑрантарасси—хӑйне уйрӑм ыйту пулса тӑрать, мӗншӗн тесессӗн тӗштырра, апкакая, ҫӗрулмине тата пахча-ҫимӗҫсене Германие илсе каймалла», тесе намӑса пӗлмесӗр ҫырать хаҫат.

Украинӑри оккупациленӗ районсенчи ялсенче пурӑнакан граждансем гитлерла бандитсемпе саратуҫӑсене ҫав тери кураймаҫҫӗ. «Гамбургер фрейденблат» хаҫат каланӑ тӑрӑх, пӗр «ялхуҫалӑх руководителӗн кӑна мар хӑйӗн ӗҫӗшӗн хӑйӗн пуҫне хывма тивре».

## ҪУРҪӖР АФРИКӐРИ ВӐРҪӐ ӖҪӖСЕМ

ЛОНДОН, декабрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Ҫурҫӗр Африкӑри союзлӑ вӑйсен командованийӗн штабӗ ҫапла пӗлтерет: декабрӗн 12-мӗшӗнче союзниксен малти чаҫӗсем разведка тунӑ. Противник ҫурҫӗрпе кӑнтӑр енчен Меджез Эль-Бабу патне сӑрхӑнса кӗме хӑтланнине сирсе янӑ. Декабрӗн 11-мӗшӗнче пулнӑ ҫапӑҫу ҫинчен илнӗ ҫӗнӗ хыпарсем тӑрӑх (декабрӗн 11-мӗшӗнче союзниксен войскисем противникӑн ҫурҫӗрти ҫыран енчен тапӑнса пынӑ колоннине сирсе янӑччӗ), ҫав ҫапӑҫура 100 ҫынна вӗлернӗ, 50 ҫынна тыткӑна илнӗ. Союзниксен ҫухатӑвӗсем противникӑнни шайӗнчен пысӑк мар. Америка бомбардировщикӗсем декабрӗн 13-мӗшӗнче Бизертӑри, Тунисри тата Сусри доксем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Командованин представителӗ каланӑ тӑрӑх, ҫавӑн чухне Тунисра тӗнӗл держависен позицийӗсене хирӗҫ кӗрешме тытӑннӑранпа чи нумай самолет тапӑннӑ.

Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англи бомбардировщикӗсем декабрӗн 12-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Палермона тата Ҫурҫӗр Африкӑри паха объектсене тапӑннӑ.

«Вашингтон пост» хаҫатӑн обозревателӗ Новер ҫапла калать: Испания нейтралитет политикине тытса пыни вӑл вӑхӑтлӑха сӑлтавсем пирки пулакан япала, анчах та Франко нейтралитет тытни пӗрлешнӗ ҫӗршывсемшӗн усӑллӑ, мӗншӗн тесессӗн вӑл Гитлерла Испанин Мароккине Ҫурҫӗр Африкӑна хирӗҫ вӑрҫмалли база туса хума кансӗрлет. Новэр Франко нейтралитет тытасси ҫинчен каланине айванла ҫӑмӑл ӗненессинчен сыхланма сӗнет, мӗншӗн тесессӗн, тет вӑл, Гитлер Испание союзниксене хирӗҫ кӗрешмелли база туса хурас тесессӗн, Франко ӑна пулӑшатех, тэт.

## РОММЕЛЬ ВОЙСКИСЕМ ЭЛЬ-АГЕЙЛА ПАТӖНЧЕН ЧАКСА ПЫНИ

ЛОНДОН, декабрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланӑ тӑрӑх, Каиртан официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтереҫҫӗ: паян ирхине ирех Роммель войскисем Эль-Агейла патӗнчи хӑйсен тӗреклетнӗ позицийӗсенчен тухса кайнӑ, вӗсем хӗвеланӑҫ енелле чакса пыраҫҫӗ.

Енер 8-мӗш арми Роммель войскисене Мерса-Брега патӗнчи тӗреклетнӗ позицисенчен хӗссе кӑларнӑ. Противник пӗр чарӑнмасӑр хӗвеланӑҫ енелле чакса пырать, ӑна 8-мӗш армин малти отрячӗсем хӑваласа пыраҫҫӗ.

## БУАССОН КАЛАНИ

ЛОНДОН, декабрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: Мароккӑри радио Францин Ҫурҫӗр Африкин генерал-губернаторӗ Буассон тунӑ заявление сарать. Ҫав заявленире ҫапла каланӑ: Францин Хӗвеланӑҫ Африки Ҫурҫӗр Африкӑпа пӗрле хутшӑннӑ хыҫҫӑн ҫавсенчен кашнийӗн пысӑк автономи пулать. «Союзниксен влаҫӗсемпе сыхӑнса тӑрасси пӗр-пӗрне питӗ хисепленӗ, ӑнланнӑ, чунтан-чӗререн кӑмӑлланӑ условисенче пулса пырать. Француз нацин территорине ирӗке кӑларас тесе, союзниксемпе килӗшӳсем тунӑ; ҫав килӗшӳсем вӗсем Францин Ҫурҫӗр Африкинче тата Ҫурҫӗр Африкӑра Францин прависене пӗтӗмпех сыхласа хӑварас никӗс ҫинче ҫирӗплэнсе тӑраҫҫӗ. Паянтан вара Францин Хӗвеланӑҫ Африки, хӑйне панӑ ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ курса, пӗрлехи ӗҫсене хутшӑнма пултарать»,—тенӗ ҫав заявленире.

## АМЕРИКА ХАҪАЧӖСЕМ ФРАНЦИН АФРИКИНЧИ ЛАРУ-ТӐРУ ҪИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, декабрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Францин Хӗвеланӑҫ Африки, Дакар порчӗ союзниксен ҫумне хутшӑнни ҫинче чарӑнса тӑрса, «Вашингтон стар» хаҫат ҫав ӗҫ пӗрре перре ямасӑрах пулнине палӑртать. Хаҫат ӑна савӑнӑҫлӑ ӗҫ тесе шутлать, анчах та вӑл ӗҫ Дакар влаҫӗсем Дарланпа килӗшсе татӑлнине пула ӑнӑҫнӑ, ҫавӑнпа та ҫак лару-тӑру ҫинчен сыхланарах калаҫмалла, тет вӑл. Эйзенхауэр генерал ҫапла туса США государство департаменчӗн практики хыҫҫӑн пынӑ. Ҫав практика вӑл Франци колонийӗсен политика тӗлӗшӗнчен пӗр-пӗринчен уйрӑм тӑракан чаҫӗсене тытса тӑракан кирек мӗнле группировкӑпа та ҫыхӑну тытасси пулса тӑрать. Эйзенхауэр генерал урӑхла тума та пултараймӑн, мӗншӗн тесессӗн Ҫурҫӗр Африкӑра вырӑнти влаҫсем пурте Дарлан хыҫҫӑн пыракан ҫынсенчен тӑраҫҫӗ, ҫав влаҫсем вӑл районсенче де Голлӗн влаҫне туса хунине хирӗҫ тӑнӑ пулӗччӗҫ.

«Крисчен сайенс монитор» хаҫат Дарланпа килӗшӳ тунине ырлакансене хирӗҫ ҫырать. Вӑл ҫакна кӑтартса парать: союзниксем Дакарпа усӑ курассине пӗр паллӑ таран чакарни, Дарлан союзниксен ҫарпа вӑрҫӑ пӗлтерӗвӗсене радио тӑрӑх пама чарни — ҫаксем Пӗрлешӳллӗ Штатсем Франци Африкине ҫителӗклӗ таран контрольлесе тӑманнине кӑтартаҫҫӗ.

## АМЕРИКА ПИЧЕЧӖ ИСПАНИ ПОЗИЦИЙӖ ҪИНЧЕН МӖН ҪЫРАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, декабрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Америка пичечӗ Испанин позицийӗ ҫинчен темиҫе статья пичетлесе кӑларнӑ. Юнайтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчӗ, Франкон нумаях пулмасть каланӑ сӑмахӗ ҫинче чарӑнса тӑрса (Франко хӑйӗн ҫав сӑмахӗнче тӗнӗл держависене мухтанӑ), ҫапла ҫырать: темиҫе официальнӑй ҫын каланӑ тӑрӑх, Франкон ҫав сӑмахӗ Испания нейтралитет тытас политикӑна улӑштарманни ҫинчен калать. Франко Пӗрлешӳллӗ Штатсене хирӗҫ тӳрех пӗр сӑмах та каламан.

«Нью-Йорк таймс» хаҫатӑн Вашингтонри корреспонденчӗ те ҫавӑн пек шухӑшах калать. Вӑл ҫапла ҫырать: Вашингтонри тата Лондонри пӗлсе тӑракан ҫынсем каланӑ тӑрӑх, Испания малашне те нейтралитет тытса тӑрӗ, мӗншӗн тесессӗн вӑл хӑйне хӑй ҫапӑҫу хирӗ туса хурасшӑн мар. Корреспондент илнӗ хыпарсем тӑрӑх, Испани ҫарӗнчи чи аслӑ офицерсем нумайӑшӗ Гитлерпа тата Муссолинипе пӗрле килӗштерсе ӗҫленине хирӗҫ тӑраҫҫӗ.

«Нью-Йоркуорлд телеграмм» хаҫат шухӑшӗпе, Франко вӑл «хӑйне хӑй нейтральнӑй пек кӑтартать ҫеҫ», Испанин позицийӗ союзниксен Ҫурҫӗр Африкӑри войскисен флангне хӑратса тӑрать.

**Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

**Доводится до сведения организаций и учреждений, что пристань Чебоксары** с 16 XII—1942 г. по 10 февраля 1943 года проводит заключение договоров на перевозку грузов с большой, малой скоростью и на буксировку плотов в навигацию 1943 года по всем рекам Волжского Бассейна.

ПРИСТАНЬ.

2—1

**Требуются** зав. складом строительных материалов и бухгалтер, знакомый с учетом материалов и расчетами по зарплате.

Обращаться по адресу: ул. Володарского, 5, Дом печати, 2-й этаж, ком. 8.

**РЕДАКЦИ АДРЕСӖ:** г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. **ТЕЛЕФОНСЕМ:** редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, промышленность пайӗн 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11270 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф б. 58 84 п.